# "ÇĔНĔ ХĔВЕЛ ÇĔКЛЕННИНЕ ÇĔНĔ ШУХĂШСЕМПЕ КĔТСЕ ИЛЕТĔП"

### Чăваш халăх писателĕ Юхма Мишши 60 çул тултарнă май

*Эп - хам сăмахăн япавçи,*
*Эп чăнлăхшăн çула тухатăп:*
*Пĕр чăнлăх çеç тепей арчи,*
*Ăна эп пурпĕрех тупатăп.*

*Юхма Мишши*

Юхма Мишши (Михаил Николаевич Ильин) Чăваш Республикинчи Патăрьел районĕнчи Сăкăт ялĕнче, колхозник килйышĕнче çуралса ÿснĕ. Ку ырăнсене ĕлĕк Юхма тăрăхĕ тенĕ. Тăван кĕтесне юратса, Михаил Николаевич литературăри хушаматне унăн ячĕпе илнĕ. Сăкăта Ентимерпе Шан-Шаккай пуçарса янă теççĕ. Шăпах Ентимеркассинче çуралса ÿснĕ пирĕн пулас çыравçă.

Писатель ачалăхĕ йывăр вăрçă çулĕсене лекнĕ. 1944 çулта ашшĕ фронтра пуç хунă хыççăн пурнăç татах та хĕсĕкленет. Каярахпа Михаил Николаевич тăрăшнипе Польшăри Люблин хулин пионерĕсем (харцерсем) унăн ашшĕн вил тăприне шыраса тупнă. 1968 çулта çыравçă амăшĕпе унта çитсе килнĕ, ашшĕне çĕре çитиччен пуç тайнă.

Çителĕклĕ пурнăçпа пурăнман пулин те, чунĕ пуян пулнă Ильинсен йăхĕн. Юхма Мишшин ашшĕ, Илюш Микули, колхозшăн йывăр çулсенче хăйĕн лупасĕ çине витнĕ улăма колхоз ĕнисене леçсе панине Сăкăтра халĕ те астăваççĕ-ха. Пулас писателĕн асламăшĕ Ăста Наçтук таврари чи паллă юмахçă пулнă. Мĕн чухлĕ юрă, халап илтмен пулĕ унран мăнукĕсем. Асламăшĕн сăмахĕсене тăнланăçемĕн çамрăк Мишша та халăхăн ăс-хакăлĕ пысăккине чĕрипе туйса илнĕ. Вăл хăй те шкулта вĕреннĕ чухнех çав юмах-халапсене, юрăсене пуçтарса çÿреме пуçлать.

Ăста карчăк пулнă Наçтук кинемей. Кăткă йăвине çĕмĕрме тăнă

ачана хăр-хар кăшкăрса пăрахман, лăпкăн кăна çапла каланă: "Ачам, кам кăткă тĕмине салатать, çавăн пӳрчĕ çунса каять..."

Патак çĕкленĕ ачан алли самантрах çĕрелле усăннă: камăн хăйĕн çурчĕ çуннине курас килĕ.

Урамран йĕрсе таврăннĕ мăнукне асламăшĕ çапла лăплантарнă: "Куратăн-и ял хĕрринчи Чĕкĕрчек сăртне. Чĕкĕрчек паттăра хисеплесе çапла каласçĕ ăна. Ӳссен эсĕ те ун пекех паттăр пулăн, вара сана никам та кӳрентереймĕ".

Кăна илтсен, ачан куçĕ çиçме пуçланă. Виçерен иртсе алхасакан вĕтĕр-шакăра вара Наçтук аппа хăй Шехерченпе Саркамăш юрăçăсем, Ылттăнпик ятлă чăваш патши çинчен каласа панă. Пыл-çу чĕлхе-çăварлă Наçтук аппан сăмахĕсем юхнă та юхнă.

Мĕн акатăн, çав шăтать теççĕ. Ырă вăрлăхăн çимĕçĕ те лайăх пулать. Ильинсен пилĕк ачи те халăха юрăхлă пулса çитĕннĕ. Асли, Петр, мĕн ачаран кĕвĕ-çемĕ юратса ӳснĕскер, композитор, сăмах илемне хаклама пĕлекен Иванпа Миша - пĕри хĕрӳллĕ пропагандист, тепри çыравçă пулса тăнă. Хĕрĕсене - Клавдипе Лидăна ял çыннисем сăпайлă, çепĕç чĕлхеллĕ пулнăшăн сума сăваççĕ. Ĕçне кура хисепĕ. Çемьери виçĕ ывăла та халăх Чăваш Республики культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ ята парса чыс турĕ.

Пирĕн юбиляршăн чи хакли - Чăваш халăх писателĕн ячĕ. Тăван халăха юратса, тĕпчесе çырнă ĕçĕсемпе тивĕçнĕ çак сума. Халăха юратасси тăван яла, тăван атте-аннене хисепленинчен пуçланать. Ку таранччен писателĕн ĕç пӳлĕмĕнче ăруран ăрăва куçса пынă, 300 çул каялла илемлетсе тĕртнĕ сурпан упранать. Унччен илемлĕхе ăнланса хаклама пĕлнĕ ку йăхра. Хăйĕн 50 çулхи юбилярне иртterme Сăкăта пынă ушкăна писатель çитнĕ çитменех амăшĕн, Марина Васильевнăн вилтăпри çине илсе кайнă. Ашшĕ вăрçăра пуç хунă пулин те, унăн хĕресĕ те пур масар çинче.

Юхма Мишшин тĕрекĕ хăйĕн туслă çемйи. Унăн мăшăрне - Роза Ивановнăна Шевлепи çыравçă ятпа пĕлеççĕ. Вĕсем виçĕ ача - Илемпи, Атнер, Элпи - ӳстерчĕç.

Пурнăçĕ ку мăшăрăн çăмăлах пулман. Чир-чĕре, йывăрлăхсене

пĕрле çĕнтернĕ. "Пурнăç - вăл кĕрешӳ", - тет Юхма. Унăн ĕç пӳлĕмĕнче ăмăрткайăка ӳкернĕ тĕрĕ пур. Мăшăрĕ, Роза Ивановна, пĕрлешсенех тĕрлесе парнеленĕ ăна. Ку пирĕн пурнăç символĕ пултăр тесе йышăннă çамрăк мăшăр тĕрре. Ирсĕр çĕлене ăмăрткайăк халь анчах ярса тытнă пулас, çуначĕсем хăватлă вĕçевре. Ăмăрткайăкра никам тытса чарайми вăй туятăн. Чăн-чăн юрату вăл нихăçан та ватăлмасть.

Шкулта чухнех çырнă Юхма Мишши. Унăн пĕрремĕш кĕнеки - "Оксана " повесть 1962 çулта çутă кун курнă. Халь Михаил Николаевич 80 ытла кĕнеке авторĕ. Вĕсен пĕтĕмĕшле тиражĕ 5 миллионран иртет. Çырнисĕр пуçне шкул çулĕсенче унăн чунне çывăх тата тепĕр туртăм пулнă: вăл шашкăлла выляма юратнă. Республикăри çамрăк та ăста шашистсенчен пĕри пулнă. Ăмăртусенчен час-часах пĕрремĕш вырăнсем йышăнса таврăннă. 10-мĕш класра вĕреннĕ чухне Мускаврва ирттернĕ шашистсен турнирне хутшăннă.

Халăх сăмахлăхĕпе, летописçсемпе, документсемпе усă курса Юхма Мишши "Элпи чечекĕсем", "Юрăçă шăпи", "Мускав çулĕ", "Кăвак çĕмрен", "Кункăш - вилĕмсĕр кайăк" тата ытти чылай хайлав çырчĕ. Писателĕн чи пысăк произведенийĕ - "Вилĕмсĕрлĕх" тетралоги. Унта çакăн пек романсем кĕреççĕ: "Эткер", "Термен", "Анне çăкăрĕ" тата "Атте пахчи". Вĕсенче автор чăваш халăхĕ И.Я.Яковлев тăрăшнипе епле çутта тухнине сăнласа кăтартнă.

Юхма Мишши çитĕннисемпе пĕрлех ачасем валли те нумай çырать. Унăн "Шурçамка", "Илĕртӳллĕ инçет" повеçĕсене, "Палăк", "Шуршăл ачи", "Çăлтăрсем чĕнеççĕ", "Вата хурама вăрттăнлăхĕ", "Хăлат юмахĕсем", "Мулкач валли шурă кĕрĕк" кĕнекисене ачасем алран ямасăр юратса вулаççĕ. Писатель халь те ачалăхран уйрăлман пекех çак калавсене вуласан.

Юхма Мишши чăваш литературипе искусствинче чылай çĕнĕ сăмах каларĕ. 1985 çулта вăл Федор Васильев композиторпа "Пӳрнеске" опера çырчĕ. Ку вăл пĕрремĕш чăваш ача-пăча опери. Пукане театрĕ валли чылай пьеса хайларĕ.

Унӑн кӗнекисенчи сӑнарсем тахҫанах ача-пӑчан юратнӑ геройӗсем пулса тӑнӑ ӗнтӗ. Уйрӑмах Пӑрнескене кӑмӑлласҫӗ. Ахальтен мар ӗнтӗ Кӳкеҫре пӗр ясли-сада "Пӑрнеске" ят панӑ.

Кашни сӑмах, кашни сӑнар писателӗн чун-чӗри витӗр тухса хут ҫине ҫырӑнать. "Салтак амӑшӗ" повӗҫри тӗп геройӑн прототипӗ - Юхма Мишшин амӑшӗ. Тӑван ялӗнчи чаплӑ сунарҫӑ - Валяхха акӑ - "Шурҫамка" повӗҫе кӗрсе юлнӑ. 50 ҫулхи юбилейне уявлама тӑван ялне кайнӑ чухне Сӑкӑт патнелле ҫывхарнӑ май Михаил Николаевич Шурҫамка ӑҫта-ӑҫта ҫӳренине, хӑш вырӑнта ӑна персе вӗлернине каласа пычӗ. "Эпӗ ача чухне кунта тӑршшӗпех вӑрманччӗ, халь мӗншӗн касаҫҫӗ ӑна, ӑнланмастӑп", - тесе пӑшӑрханчӗ писатель.

60 ҫулхи юбилейне Юхма Мишши кӑҫал ҫулла, ҫутҫанталӑк ешернӗ вӑхӑтра, ирттересшӗн. Чунтан кӗтеҫҫӗ ку уява Чӑвашстанра.

"Ҫӗнӗ хӗвел ҫӗкленнине ҫӗнӗ шухӑшсемпе, ҫӗнӗ кӑранташпа, ҫӗнӗ ӗмӗтпе, ҫӗнӗ хутпа кӗтсе илетӗп", - ҫырать пӗр хайлавӗнче писатель. Шухӑшласа хуни вӗҫӗ-хӗррисӗр. Юбилей тӗлне вӑл икӗ ҫӗнӗ кӗнеке ҫырса хатӗрлерӗ, часах вӗсем пичетленсе тухмалла.

Яланах ыр сунатпӑр сана, юратнӑ юбилярӑмӑр.

*1996*

***Галина Еливанова,***
***К.В.Иванов ячӗллӗ***
***литература музейӗн ӗҫченӗ.***